# Çĕнтерӳ çулĕ

1930 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен тухать

электронлă адрес: print@vurnar.cap.ru

Вăрнар район хаçачĕ

2010 çул
авăн/сентябрь/ уйăхĕн 22-мĕшĕ
юн кун
113/10274 / №
Хакĕ ирĕклĕ


## Министрсен Кабинечĕн çĕнĕ йышне çирĕплетнĕ

### Сентябрĕн 17-мĕшĕнче Правительство çуртĕнче Михаил Игнатьев Президент канашлу ирттернĕ, республикăн Министрсен Кабинечĕ тĕлĕшпе тунă йышăнусене пĕлтернĕ

**ПРАВИТЕЛЬСТВĂРА**

Президентăн Чăваш Республикинче патшалăх управленине лайăхлатмалли мерăсем çинчен калакан Указĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин Промышленноçпа энергетика министерствине пĕтернĕ, ун функцийĕсене ытти ĕç тăвакан влаç органĕсем хушшинче пайланă.

Чăваш Республикин Экономика аталанăвĕпе суту-илӳ министерствине çĕнĕлле йĕркелесе Чăваш Республикин Экономика аталанăвĕн, промышленноç тата суту-илӳ министерствине туса хунă, ăна Чăваш Республикин Промышленноçпа энергетикăн пĕтернĕ министерствин промышленноç сферинчи функцийĕсене панă.

Чăваш Республикин Хула тăвас ĕç тата общество инфратытăмĕн аталанăвĕн министерстви Чăваш Республикин Промышленноçпа энергетикăн пĕтернĕ министерствин энергетика сферинчи функцийĕсене пурнăçлĕ.

Ĕç тăвакан влаç органĕсен структурине Чăваш Республикин Патшалăхăн пурăнмалли çурт-йĕр инспекцине тата Чăваш Республикин Хăй тĕллĕн çӳрекен машинăсен тата техникăн ытти тĕсĕн техника юсавлăхне сăнаса тăракан патшалăх инспекцине кĕртнĕ.

Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕсемпе:

**Александр Николаевич ГОНЧАРОВА** Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумне – Чăваш Республикин хула тăвас ĕç тата общество инфратытăмĕн министрне;

**Иван Борисович МОТОРИНА** Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумне – Чăваш Республикин экономика аталанăвĕн, промышленноç тата суту-илӳ министрне;

**Сергей Владимирович ПАВЛОВА** Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумне – Чăваш Республикин ял хуçалăх министрне;

**Николай Васильевич СМИРНОВА** Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумне – Чăваш Республикин финанс министрне;

**Геннадий Семенович ФЕДОРОВА** Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумне – Чăваш Республикин Раççей Федерацийĕн Президенчĕ çумĕнчи полномочиллĕ представительне;

**Светлана Александровна ЕНИЛИНĂНА** Чăваш Республикин пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрне;

**Роза Михайловна ЛИЗАКОВĂНА** Чăваш Республикин культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министрне;

**Венера Петровна МУЛЛИНĂНА** Чăваш Республикин сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министрне;

**Надежда Викторовна ПРОКОПЬЕВĂНА** Чăваш Республикин юстици министрне;

**Галина Петровна ЧЕРНОВĂНА** Чăваш Республикин вĕренӳ тата çамрăксен политикин министрне уйăрса лартнă.

Чăваш ен Президенчĕн йышăнăвĕпе Чăваш Республикин физкультура, спорт тата туризм министрĕн тивĕçĕсене **Сергей Владимирович МЕЛЬНИКОВ** вăхăтлăха пурнăçласа пырĕ.

**ЧР ПА пресс-служби.**

## Çырава хатĕрленсе

Пĕтĕм Раççейри халăх çыравне хатĕрленсе сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне районта пысăк ĕç туса ирттернĕ.

Кăçалхи халăх çыравне хатĕрленессипе тата ăна ирттерессипе район администрацийĕ çумĕнче ятарлă комисси ĕçлет, унăн ларăвĕсем кашни кварталтах иртеççĕ. Кăçал район пуçлăхĕн пĕрремĕш заместителĕ А.Борисов ертсе пынипе ял поселенийĕсен пуçлăхĕсемпе специалисчĕсем хутшăннипе иртнĕ ларура хатĕрленӳ ĕçĕсем мĕнле пынине, информаципе ăнлантару ĕçне епле йĕркеленине пăхса тухнă.

Районти комиссин черетлĕ ларăвĕн кун йĕркине çырав персоналĕ валли пӳлĕмсене хатĕрлессипе, транспортпа тата çыхăну хатĕрĕсемпе тивĕçтерессипе; обществăлла йĕркелĕхе сыхлассипе тата çырав ирттерме хутшăнакансен, бланксемпе ытти документсен хӳтлĕхне тивĕçтерессипе çыхăннă ыйтусене; район çырава хатĕррине пăхса тухассине кĕртнĕ.

Районта пур ял поселенинче те адрес хуçалăхĕсене йĕркене кĕртнĕ: 14657 çуртпа 527 урам инвентаризаци витĕр тухнă; çуртсем çине 9241 номер çакнă тата 432 аншлаг вырнаçтарнă. Адрес хуçалăхне йĕркене кĕртме ял поселенийĕсен администрацийĕсем уйăрнă 369,4 пин тенкĕпе усă курнă, спонсорсем те пулăшнă.

Март–май уйăхĕсенче ял поселенийĕсенче адрес хуçалăхне тĕрĕсленĕ май çитменлĕхсем тупăннăччĕ. Сăмахран, Вăрнарта хăш-пĕр урам ячĕсене кăтартнисем, уйрăм çурт-йĕр секторĕнче çурт номерĕсем пулман. Вăрнар хула поселенийĕн пуçлăхĕн даннăйĕсем тăрăх, июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне çитменлĕхсене пĕтернĕ.

Çырав тата инструктор участокĕсене вырнаçтарма пӳлĕмсене йышăнас тĕллевпе те ятарлă икĕ ушкăн ĕçлет. 19 пӳлĕмрен кашнинех тĕрĕсленĕ. Вĕсене пурне те сыхлавпа тивĕçтернĕ, алăкĕсем çирĕп, çăрасем, çуртсен пĕрремĕш хучĕсенче решеткесем пур. Çавăн пекех пӳлĕмсене сĕтел-пуканпа, шкафсемпе, телефон çыхăнăвĕпе, пушар сӳнтермелли хатĕрсемпе тивĕçтернĕ. Шалти ĕçсен Вăрнар районĕнчи пайĕ çумĕнчи ведомствăна пăхăнман хурал уйрăмĕ çырав тата инструктор участокĕсен пӳлĕмĕсене инженерипе техника енчен çирĕплетнине, хуралпа пушар сигнализацийĕпе тивĕçтернине тĕрĕслет.

2 стр.

## Выльăх шутне сыхласа хăвармаллах

### Кăçалхи тип çанталăк хресчене пуçаруллă утăмсем тума хистет. Выльăх-чĕрлĕхе хĕл лайăх каçарас тесе район аграрийĕсем çĕршывăн тĕрлĕ регионĕсенчен апат турттараççĕ

**ЯЛ ХУÇАЛĂХĔ**

**Çуркунне тыр-пул вăхăтра акса хăвармалла. Çăвĕпех выльăх-чĕрлĕх валли апат ытлăн-çитлĕн хатĕрлемелле. Кĕр мăнтăрĕпе ял хуçалăх культурисене пĕр тăкаксăр пухса кĕртмелле... Татти-сыпписĕр ĕç. Кăçалхи сакăр уйăхра выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче мĕнле тимленине пĕтĕмлетес тата кĕркуннехи-хĕллехи тапхăрта мĕн пур тытăмри хуçалăхсем умĕнче тăракан задачăсене тишкерес тĕллевпе авăн уйăхĕн 17-мĕшĕнче «Янгорчино» кооперативра семинар-канашлу иртрĕ.**



Надежда Сергеева зоотехник-селекционер кăçал выльăхсене искусствăлла майпа пĕтĕлентерекен техниксен республикăри ăмăртăвĕнче çĕнтернĕ, çĕршыв конкурсне хутшăнма тивĕçнĕ.

Район пуçлăхĕ Анатолий Кузьмин, ял хуçалăх организацийĕсен, тирпейлекен предприятисен ертӳçисем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, зооветспециалистсем, ветеринари участокĕсен заведующийĕсем чи малтан çĕрпелсен фермине кĕрсе курчĕç. Витесенче типтерлĕ. Кунта юсав ĕçĕсене вĕçленĕ, пĕтĕм урая бетонланă. Măйракаллă шултра выльăхсем çăва тухнăранпах ешĕл курăк çинче çӳреççĕ. Ираида Никифорова тĕп зоотехник каланă тăрăх, вĕсене çак кунсенче çуллахи лагерьтен фермăна куçарĕç. Хуçалăхра 695 пуç măйракаллă шултра выльăх-чĕрлĕх шутланать, çав шутран 290-шĕ – ĕнесем. Хушка пуççем пĕлтĕрхи çак тапхăртинчен 8 пуç нумайрах. Кăçалхи сĕт хакĕпе хресчен кăмăллă. «Иртнĕ çул çуркунне-çулла сĕте 6–7 тенкĕпе кăна туянатчĕç. Кăçал вара продукци хакĕ ӳсрĕ – сĕте 16 тенкĕпе сутатпăр. Хуçалăх кассине сакăр уйăхра 12 миллион тенкĕ ытла укçа пырса кĕчĕ. Ку вăл çулталăкри кăтартупа танлашать», – терĕ кооператив ертӳçи Геннадий Васильевич Романов.

«Янгорчино» предприяти ăратлă выльăхсене ĕрчетессипе ĕçлекен хуçалăх шутланать. Ахальтен мар ĕнтĕ ĕнесен продуктивлăхĕ пысăк. 32 хушка пуçран пĕлтĕр вăтамран 8 пиншер, 101-шĕнчен – 7 пиншер килограмм сĕт суса илнĕ. Выльăх-чĕрлĕхе хĕл лайăх каçарас тесе хуçалăхра ешĕл масса – сенажпа силос – 2500 тонна хывнă. Утă сахалрах. Паллах, апат тата кирлĕ. Ертӳçĕ жмых туянмаллине каларĕ. Выльăх-чĕрлĕх отраслне аталантарассипе тĕллевлĕ тимлени паха «çимĕç» парать. Çакна тĕпе хурса ĕçлеççĕ те çĕрпелсем. Акă чӳк уйăхĕнче кооперативра 100 пуç ĕне вырнаçмалăх çĕнĕ вите хута каймалла. Калăпăшлă ĕçе предприяти çăмăллăх кредичĕпе тата хăйĕн укçи-тенкипе усă курса пурнăçлать. Хастар, пултаруллă çынсем пуртан хуçалăх аталану çулĕпе пырать.

Семинарăн теори пайĕ Çĕрпел ял тăрăхĕн конференц-залĕнче иртрĕ. Район администрацийĕн ял хуçалăхĕпе экологи пайĕн тĕп специалисчĕ Георгий Романов сакăр уйăхра мĕн пур тытăмри хуçалăхсем выльăх-чĕрлĕх отраслне аталантарассипе мĕнле тимленине тишкерчĕ. Ĕç кăтартăвĕ лайăх – авăн уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне мĕн пур тытăмри хуçалăхсем аш-пăш 4007 тонна (103 процент), сĕт 24971 тонна (105 процент) туса илнĕ. Çĕрпел, Малти Ишек, Санарпуç, Хирпуç, Çавалкас, Аçăмçырми, Ярмушка, Калинино ял тăрăхĕсенче выльăх-чĕрлĕх отраслне аталантарассипе курăмлă ĕçлеççĕ. Ĕне ашне туса илессипе районта Карл Маркс ячĕллĕ хуçалăх малта пырать. Вăрнарти аш-какай комбиначĕ сысна ĕрчетессипе тухăçлă тимлет. «Чух-чухсен» хисепĕ сакăр уйăхра 11838 пуçа çитнĕ. Районта сысна ашĕ туса илнин 93 проценчĕ – комбинатăн тӳпи.

Ял хуçалăх организацийĕсем сĕт 7331 тонна е иртнĕ çулхи çак тапхăртинчен 17 процент ытларах туса илнĕ. Ку ĕçре тĕслĕх кăтартакан предприятисем – Вăрнарти аш-какай комбиначĕ, «Янгорчино», Карл Маркс ячĕллĕ кооператив, «Мураты» хуçалăх, «Агрохмель» агрофирма.

2 стр.

**«Çĕнтерӳ çулĕ» хаçата 2011 çулăн пĕрремĕш çур çулĕ валли çырăнтарас тапхăр пуçланчĕ**

2011 çулхи январь–июнь уйăхĕсенче ăна почта урлă илсе тăма унчченхи пекех 187 тенкĕ те 80 пус тӳлемелле пулать. Хаçата редакцие килсе илмелле те çырăнтараççĕ, хакĕ – 110 тенкĕ. «Çĕнтерӳ çулне» çырăннисем Вăрнар чиркĕвĕн прихучĕ кăларса тăракан «Георгиевский листок» хаçата малашне те тӳлевсĕр илсе тăрĕç.

**«Çĕнтерӳ çулĕ» хаçатсăр ан юлăр. Юратнă хаçата çырăнăр, вулăр.**

## ÇАНТАЛĂК

| Кĕçнерни кун | Эрне кун | Шăмат кун |
|---|---|---|
| 23.09 | 24.09 | 25.09 |
| +13 | +10 | +17 |
| +7 | +7 | +9 |

«Метеоновости» информаци агентствин информацийĕ тăрăх

